**Пĕлсе тăма!**

**Пилотсăр вĕçекен аппаратсем атакăлас хăрушлăх пурри çинчен СМС- хыпар илсен, пилотсăр вĕçекен аппаратсем тӳрремĕнех тапăнас хăрушлăх пулсан, çавăн пекех регионти (муниципалитетри) пĕлтерӳ системине хута ярсан халăхăн мĕн тумалла**



БПЛА атакăлас хăрушлăх пуррине пĕлтерни Чăваш Республикин чиккинче БПЛАсем вĕçнине пĕлтерет. Çав вăхăтра пĕтĕм служба хатĕр тăмалла.

Асăннă сигнал республика территорине тӳрремĕнех атакăланине пĕлтермест, кулленхи пурнăçа чăрмантармасть.

Хыпара илсен лăпкă пулмалла, хăрамалла мар, çав вăхăтрах республикăри официаллă сайтсенче вырнаçтарнă, «МЧС России» мобильлĕ приложенире тата телевиденипе радиора трансляцилекен информацие сăнаса тăмалла.



БПЛАпа тӳрремĕнех атакăлас хăрушлăх пулсан **«ПУРТЕ ТИМЛĔ ПУЛĂР!»** (малалла - **«ВНИМАНИЕ ВСЕМ!»**) сигналпа пĕлтермелли регион (муниципалитет) системи хута каять.

**Пӳртре (çуртра) пулсан:**

БПЛА атакăланă чухне чӳречесĕр, тытса тăракан стенасем хушшинче вырăн тупмалла;

чӳрече патĕнчен аяккарах пытанмалла;



урайне ларса пуçа алăпа хупламалла;

май пулсан çуртăн чи аялти хучĕсене, путвала е çĕр айĕнчи автостоянкăна анмалла;

лифтпа усă курма юрамасть.

**Обществăлла транспортра е автомобильте:**

обществăлла транспорта водителе чарăнма ыйтмалла;

унтан çийĕнчех тухса сывăхри хӳтлĕхре пытанмалла;

харпăр автомобиле çийĕнчех чармалла;

çывăхри хӳтлĕхе кусса унта пытанмалла, хӳтлĕх çук пулсан çĕр çине, канава, пĕр-пĕр шăтăка выртмалла та пуçа алăпа хупламалла;

транспортран тухма юрамасть пулсан чӳрече патĕнчен пăрăнса пуçа алăпа хупласа пĕшкĕнмелле;



**БПЛА курсан:**

хăрушă вырăнтан хăвăртрах кайăр, 100 метртан кая мар аякка пăрăнăр, БПЛА тӳрĕ курăмлăхĕнчен пытанăр;

хăвăрпа юнашар çынсене хăрушлăх пирки асăрхаттарăр;

БПЛА курни çинчен пĕр тăхтамасăр «112» телефонпа пĕлтерĕр (оператора хăвăрăн ятăра (ФИО), БПЛА курнă вырăна, вĕсен шутне, вăхăта, БПЛА хăш еннеле вĕçнине, унăн уйрăмлăхĕсене пĕлтерĕр);

БПЛА е унăн пайĕсене асăрхасан нихăш енчен те ан тытăр.



БПЛА çывăхĕнче радиоаппаратпа, телефонсемпе, GPS хатĕрĕсемпе усă курма юрамасть.

**Урамра (çурт тулашĕнче) хăйне евĕрлĕ сасă илтсен е вĕçекен БПЛА мĕлкине курсан:**

БПЛА сассине тата сутă сигналĕсене тимлемелле;

çийĕнчех çывăхри çурт-йĕрте (хӳтĕ вырăнта, путвалта, çĕр айĕнчен каçмалли вырăнта) пытанмалла;

БПЛА курсан айкинелле тармалла, çывăхри çуртра, бетон валак, хӳме никĕсĕ, бордюр хыçне пытанмалла, вĕсем пулмасан – çĕр çине, канава, шăтăка выртмалла та пуçа алăпа хупламалла;

пĕрремĕш взрыв хыççăн çĕкленмелле мар, кусса каймалла е айккинелле шуса каймалла (малтанхи дронсем – разведчиксем, вĕсем хыççăн иккĕмĕш, виççĕмĕш пулма пултарать);

ӳкнĕ БПЛАна е унăн пайĕсене тĕкĕнмелле мар - вĕсем сирпĕнме е наркăмăшлă пулма пултараççĕ.



Пирĕн республикăра БПЛА ӳкерме чарнă. Çакăн йышши видеосем арканусене хак пама тата тепĕр атакăна тӳрлетме кăна пулăшаççĕ.